26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1944 МАРТ 16 КӖҪНЕРНИКУН 54(6549) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнче

Облаҫсен, крайсен тата республикӑсен 1943 ҫулхи пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, ССР Союзӗн Совнаркомӗ вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн, колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла аталантарассишӗн тата МТС-сен ӗҫне лайӑхлатса ярассишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура ҫак облаҫсемпе республикӑсем мала тухнӑ тесе шутласа, ҫапла тума йышӑннӑ:

1. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан тӳлемелли пӗррӗмӗш премисене ҫаксене парас:

Мускав облаҫне—МТС-сем лайӑх ӗҫленӗшӗн;
Калинин облаҫне—вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн;
Иваново облаҫне—колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн.

2. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан тӳлемелли иккӗмӗш премисене ҫаксене парас:

Чӑваш АССР-не—вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн;
Азербайджан ССР-не—колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн.

3. Укҫан тӳлемелли виҫҫӗмӗш премисене ҫаксене парас:

Горький облаҫне—вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн;
Ярославль облаҫне—колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн.

4. Грузин, Азербайджан, Армян, Таджик ССР-ӗсенчи, Коми АССР-ӗнчи, Ленинград, Смоленск, Курск, Архангельск облаҫӗсенчи тата Приморье крайӗнчи машинно-тракторнӑй станцисем лайӑх ӗҫленине палӑртас.

Иваново, Мускав, Ярославль, Молотов, Тула, Орел облаҫӗсенчи тата Грузин ССР-ӗнчи колхозсемпе машинно-тракторнӑй станцисем уйхир ӗҫӗнче лайӑх ӗҫленине палӑртас.

Таджик, Грузин ССР-ӗҫенчи, Чӑваш АССР-ӗнчи, Мускав, Горький, Калинин, Ленинград, Архангельск, Вологда облаҫӗсенчи колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатса ярас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫленине палӑртас.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 14-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПРОСКУРОВ хули енче, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн пехотипе танкӗсен контратакисене сире-сире ярса, ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, темиҫе ял туртса илнӗ. Тӑшманӑн пехотипе танкӗсен контратакисене сирсе янӑ чухне пирӗн ҫарсем гитлеровецсене ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк сухатусем кӳнӗ.

ВИННИЦА хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра—ПРИЛУКИ, ВАХНОВКА, ЖУРАВА, ЕЛЕНОВКА, ИЗАБЕЛОВКА, СТЕПАНОВКА, ЗАРУДИНЦЫ, МИХАЙЛОВКА, КОМАРОВ ятлӑ пысӑк ялсем тата ГУМЕННОЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ (ВИННИЦА хулинчен 15 километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре).

УМАНЬ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, наступление вӑйлатса пырса, Винница облаҫӗнчи район центрне — ГАЙСИН хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ШАБЕЛЬНАЯ, БУДЫ, КРИШТОФОВКА, КАРБОВКА, КУНА, ЗЯТКОВЦЫ, БУБНОВКА, СОБОЛЕВКА, ГУБНИК, ПОБОРКА, ГЛУБОЧЕК, МЕТАНОВКА, ЗАВАДОВКА, ЧЕРНЯТКА, СТАВКИ, ХАЩЕВАТО, МОГИЛЬНО, ТАУЖНА, ГРУЗСКОЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата КРИШТОФОВКА, ЗЯТКОВЦЫ, ГУБНИК, МИЛЕШКИ, ДУКЛЯ, ГЕНРИХОВКА, ХАЩЕВАТО, МОЩЕНАЯ, ТАУЖНА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

КИРОВОГРАД хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Кировоград облаҫӗнчи ПОДВЫСОКОЕ, НОВО-АРХАНГЕЛЬСК, ХМЕЛЕВОЕ район центрӗсене туртса илнӗ ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса ытти 70 яла ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — НЕРУБАЙКО, ТОРГОВИЦА, КОПЕНКОВАТА, РОССОХОВАТЕЦ, СКАЛЕВОЕ, ТИМОФЕЕВКА, ЕРДЕЕВКА, МИРОЛЮБОВКА, АНАСТАСИЕВКА ятлӑ пысӑк ялсем.

НИКОЛАЕВ хули енче УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем наступление ҫаплах ӑнӑҫлӑ вӑйлатса пынӑ, ШИРОКАЯ БАЛКА хулине (Днепр лиманӗн ҫурҫӗр ҫыраннинче), Николаев облаҫӗнчи БОЛЬШАЯ СЕЙДЕМИНУХА, БЕЛОЗЕРКА район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра— ЯВКИНО, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, БАРМАШОВО, КИСЕЛЕВКА, ЧЕРНОПОЛЬЕ, НОВО-ПЕТРОВКА, СПАССКАЯ, МАЛЕЕВКА, НОВЫЙ ОЧАКОВ, ПЕТРОПАВЛОВКА, КАЛУЗЬНЕ, МУРАХОВКА, ВАСИЛЬЕВКА, ПАВЛОВКА, ШКУРИНОВО-ЗАГОРЯНОВКА, МУЗЫКОВКА, ЧЕРНОБАЕВКА, КАСПЕРОВКА ятлӑ пысӑк ялсем тата БЕРЕЗНЕГОВАТО, ЧЕХОВИЧИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем БЕРЕЗНЕГОВАТОЕПЕ СНИГИРЕВКА ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсен районӗнче нимӗҫсен темиҫе дивизийӗнчен тӑракан пысӑк группировкине ҫавӑрса илнӗ. Ҫавӑрса илнӗ унӑран хӗсӗнсе тухма хӑтланса, тӑшман темиҫе контратака та тунӑ, анчах та нимӗҫсене кашнинчех каялла ывӑта-ывӑта янӑ. Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 10.000 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Пирӗн ҫарсем ку районра 300 ытла тӗрлӗ калибрлӑ тупӑ тытса илнӗ. Нимӗҫсен 4.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 13-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 53 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 20 самолетне персе ӳкернӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Ҫак кунсенче Чӑваш АССР Совнаркомӗ инвалидсен кооперацийӗн артелӗсем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1944 ҫулхи февраль уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ.

Йӗпреҫри «Помощь» артель (правлени председателӗ Ларин юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Алексеев юлташ) февраль уйӑхӗнче пӗтӗм продукци кӑлармалли плана 146,7 процент, куллен кирлӗ таварсем кӑлармалли плана 138,2 процент пурнӑҫланӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне Шӗнерти «20 лет Чувашии» артельрен илсе, «Помощь» артеле памалла тунӑ. Ӑмӑртура уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсене премилеме артеле 15 пин тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ.

Канашри инвалидсен «Красный воин» артельне ӑмӑртура уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсене премилеме 10 пин тенкӗ укҫан награда памалла тунӑ.

Ҫавӑн пекех Совнарком февраль уйӑхӗнче Советски районри «Рекорд», Шупашкарти «Четторгин», Ҫӗрпӳри «Труд инвалидов» тата ытти районсенчи инвалидсен кооперацийӗн артелӗсем аван ӗҫленине палӑртнӑ.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VII-мӗш сессине уҫасси ҫинчен

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VII-мӗш сессийӗ Шупашкарта 1944 ҫулхи мартӑн 18-мӗшӗнче, каҫхине 5 сехетре уҫӑлать.

СССР СОВНАРКОМӖПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТӖНЧЕ

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна палӑртаҫҫӗ: вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисене пӑхмасӑр тата хӑшпӗр облаҫсемпе крайсенче, республикӑсенче ҫанталӑк начар пулнӑ пулин те, колхозсемпе совхозсем 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пурнӑҫа кӗртрӗҫ, Хӗрлӗ Ҫарпа халӑха продовольстви, промышленноҫа чӗртавар ытлашши пысӑк чӑрмавсемсӗрех туса пама пултарчӗҫ.

Колхоз хресченӗсен тата совхозсенчи рабочисен ӗҫри активлӑхӗ пысӑкланчӗ. Вӑтамран кашни колхозник ӗҫлесе илнӗ ӗҫкунӗсен хисепӗ ӳсрӗ. Хӗрарӑм-колхозницӑсемпе совхозсенчи работницӑсем темиҫе ҫӗршер пин ҫын, арҫынсем вырӑнне тӑрса, тракторсемпе, комбайнсемпе тата ялхуҫалӑхӗнчи ытти кӑткӑс машинӑсемпе ӗҫлеме вӗренсе ҫитрӗҫ.

Ҫакӑнпа пӗрлех СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1943 ҫулта машинӑпа трактор станцийӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртаҫҫӗ, ҫавна пула тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне пурнӑҫа кӗртмен, механизациллӗ ӗҫсен шайне чакарнӑ, уйхир ӗҫӗсене вӑраха янӑ, ҫӗртме сухине тумалли тата ҫӗртмесене пӑхса тӑмалли, кӗрхи ҫӗртме тумалли тата тырпулсене пӑхса ҫитӗнтермелли плансене пурнӑҫа кӗртмен.

Чылай облаҫсемпе крайсенчи тата республикӑсенчи совет, парти тата ҫӗрӗҫ органӗсем тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуҫалӑх машинисене вӑхӑтра та пахалӑхлӑн юсассине, союзлӑ тата вырӑнти промышленность предприятийӗсенче запаслӑ пайсем туса хатӗрлессине пурнӑҫа кӗртмен; трактористсемпе комбайнерсен тата механиксен кадрӗсене суйласа илсе хатӗрлес ӗҫ ҫине тивӗҫлипе ҫаврӑнса пӑхман, вӗсене ӗҫре кирлӗ пулӑшу парса тӑман.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1943 ҫулта чылай районсенче уйхир ӗҫӗсен агротехникине ҫиелтен туса пынине тата тырпулсене пӑхса тӑрассине япӑхлатнипе сиенлӗ ӗҫ тесе шутлаҫҫӗ. Агротехника ӗҫӗсене ҫиелтен туса пыни тата акнӑ тырпулсене пӑхса тӑрас ӗҫе япӑхлатни тырпул тухӑҫлӑхне чакарасси патне тата уйхирсене ҫум пусса илесси патне илсе пырать. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халӑх Комиссариатне тата вӗсен вырӑнти органӗсене, партипе совет организацийӗсене, колхозсене, МТС-семпе совхозсене 1944 ҫулта ялхуҫалӑх ӗҫӗсен пахалӑхне тӗпренех лайӑхлатма, машинӑсемпе тракторсен паркӗпе лайӑхрах усӑ курмалла тума, тӗрӗс пусуҫаврӑнӑшӗсем туса вӗсене ҫирӗп тытса пыма, кӗрхи ҫӗртмепе таса ҫӗртмесем тунӑ ҫӗр лаптӑкӗсене ӳстерме, вӑл шутра Ҫӗпӗрпе Урал районӗсенче, ҫавӑн пекех тата Атӑл тӑрӑхӗнчи типӗ ҫанталӑк тӑракан районсенче те ҫурхи тулӑ акмалли ҫӗртмесен лаптӑкне ӳстерме, обязательнӑй йӗркепе лайӑх вӑрлӑхсем акса, акмалли нормӑсене ҫирӗппӗн тытса пыма, вырӑнти удобренисемпе анлӑн усӑ курма тата тырпулсене пӑхмалли йышӑннӑ правилӑсене ҫирӗп тытса пыма хушаҫҫӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ колхозсен, МТС-сен, совхозсен, вырӑнти ҫӗрӗҫ органӗсен, партипе совет организацийӗсен, СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе СССР Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн 1944 ҫулхи тӗп задачи — тырпулсен тухӑҫлӑхне пур майсемпе те ӳстересси, пухса илекен тӗштырӑсен тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсен пӗтӗм кирсене ӳстересси пулса тӑрать тесе шутлаҫҫӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла йышӑнна:

I. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планӗ ҫинчен

1. Колхозсенче 1944 ҫулта акмалли мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен ҫӗр лаптӑкне (ку шута Украина ССР-ӗн Днепр шывӗн сылтӑм енчи ирӗке кӑларнӑ районӗсем, Ленинградпа Калинин облаҫӗсен, Белоруссипе Эстони ССР-ӗсен Хӗрлӗ Ҫар 1943—1944 ҫулсенчи хӗлле ирӗке кӑларнӑ районӗсем кӗмеҫҫӗ), 1943 ҫулхипе танлаштарсан, 7,55 миллион гектар ӳстерсе, вӑл шутра тӗштырӑ культурисем енӗпе, 1943 ҫулхипе танлаштарсан, 5,44 миллион гектар ӳстерсе ҫирӗплетес.

2. 1944 ҫулта ҫурхи тырӑсем акмалли плана, 1945 ҫул валли кӗрхи тырӑсем акмалли плана, агротехникӑллӑ ӗҫсен планне, МТС-сенчи тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне тата тӗштырӑсем, техникӑллӑ культурӑсемпе ҫӗрулми туса илмелли плана республикӑсемпе крайсем тата облаҫсем тӑрӑх ҫирӗплетес.

3. Уралти, Ҫӗпӗрти, Атӑл тӑрӑхӗнчи тата Казах ССР-ӗнчи колхозсем ҫеремсене, нумай ҫул акмасӑр выртнӑ ҫӗрсене сухаласа ҫурхипе кӗрхи тырӑсем акмалли плана ҫирӗплетес.

4. 1944 ҫул валли МТС тракторӗсемпе сухаланӑ ҫӗрӗн кашни гектарӗн хӑйне ларакан хакне, ҫемҫе суха ҫине куҫарса шутласа, 58 тенкӗ те 06 пус чухлӗ ҫирӗплетес, вӑл шутра тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуҫалӑх машинисене капитальнӑй тата текущи ремонт тунӑ ҫӗре тухакан расходсене 8 тенкӗ те 00 пус чухлӗ ҫирӗплетес.

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, юсав ӗҫӗсем валли тухакан расходсен ҫирӗплетнӗ виҫинчен тухмасӑр, 1944 ҫулта тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуҫалӑх машинисене юсама укҫа-тенкӗ памалли нормӑсене облаҫсем, крайсем, республикӑсем тата уйрӑм МТС-сем тӑрӑх уйрӑмшарӑн туса пама ирӗк парас.

СССР Финанс Халӑх Комиссариатне, квартӑлти плансенче МТС тракторӗсемпе тӑвакан ӗҫсен хӑйне ларакан ҫирӗплетнӗ хакӗнчен иртерсе, трактористсене, комбайнерсене, трактор бригадисен бригадирӗсене тата МТС механикӗсене, СССР Совнаркомӗ 1943 ҫулхи августӑн 11-мӗшӗнче йышӑннӑ 870-мӗш номерлӗ постановлени тӑрӑх, машинӑсене лайӑх сыхласа усранӑшӑн премисем тӳлеме укҫа-тенкӗ парассине палӑртса хума хушас.

5. СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халӑх Комиссариатне, республикӑсен Совнаркомӗсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене ҫапла тума хушас:

а) ялхуҫалӑх ӗҫӗсен ҫак постановленипе ҫирӗплетнӗ планне 10 кунлӑх срокра районсем, совхозсем, МТС-сем, колхозсем, колхозниксемпе единоличниксен хуҫалӑхӗсем патне ҫитермелле;

б) плансене районсем, колхозсемпе совхозсем патне ҫитернӗ хыҫҫӑн ялхуҫалӑх культурисене йышӑннӑ пусуҫаврӑнӑшсем тӑрӑх тата ҫав пусуҫаврӑнӑшсем ҫине куҫмалли плансем тӑрӑх, ӗҫ вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ мӗн чухлӗ пуррине, тӑпра-тата ҫанталӑк мӗнлине шута илсе, вырнаҫтарса тухмалла; ялхуҫалӑх культурисене ҫавӑн пек тӗрӗс вырнаҫтарса тухни ҫав культурӑсен тухӑҫлӑхне май килнӗ таран ытларах ӳстерме тата турттарма йывӑр продуктсене (кӑшман, ҫӗрулми пахча-ҫимӗҫсем тата ыт. те) инҫете турттарассине пӗтерме пулӑштӑр;

в) колхозсен производство планӗсене, приходсемпе расходсен сметисене, МТС-сен промфинпланӗсене тӑвассине тата МТС-сем колхозсемпе договорсем тӑвассине 1944 ҫулхи мартӑн 20-мӗшӗнчен кая юлмасӑр ӗлкӗртмелле;

г) МТС-ӑн кашни трактор бригадинче тата колхозӑн уйхир бригадинче ҫурхи ӗҫсен планӗсене тӑвассине тата вӗсене ҫирӗплетессине уйхир ӗҫӗсем пуҫланиччен икӗ эрне маларах ӗлкӗртмелле

6. Республикӑсен Совнаркомӗсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене ҫапла тума хушас:

а) ҫак постановленипе пӑхса хуман уйрӑм тӗштырӑсен тухӑҫлӑхӗ тӑрӑх, ҫавӑн пекех тата техникӑллӑ культурӑсен, пахча-ҫимӗҫсен, выльӑх апачӗ валли акакан культурӑсен тата ҫырла-ҫимӗҫсен тухӑҫлӑхӗсем тӑрӑх заданисем палӑртса хумалла;

б) парниксем тумалли, вӑрман лартмалли, пурҫӑн хурчӗ ӗрчетмелли плансене, улӑхсемпе ҫарансене лайӑхлатмалли мероприятисен планне ҫирӗплетсе, районсемпе колхозсем патне ҫитермелле;

в) районсемпе колхозсем валли шӑваракан ҫӗрсем ҫинче мӗн чухлӗ тырӑ акмалли тата тырпул туса илмелли заданисем памалла, шӑварса тӑракан ҫӗрсемпе пӗтӗмӗшпех усӑ курмалла тӑвас пулать.

7. Колхозсенче чӗрӗ туртӑм вӑйӗпе уйхир ӗҫӗсенче май килнӗ таран туллинрех усӑ курмалла тӑвас шутпа:

а) республикӑсен Совнаркомӗсене, крайисполкомсемпе — облисполкомсене, кашни уйрӑм ӗҫпе Оборонӑн Государственный Комитечӗ ирӗк памасӑр, туртӑм вӑйне мӗнле те пулин ӗҫе мобилизацилеме чарас. СССР прокурорне колхозсенчи чӗрӗ туртӑм вӑйне законсӑр мобилизацилекен айӑплӑ ҫынсене уголовлӑ йӗркепе ответ тыттарма хушас;

б) ҫураки пуҫланиччен пӗр уйӑх маларах мӗнпур колхозсене лашасем тӗлӗшпе ҫ повинноҫӗнчен хӑтарас.

8. Колхозсемпе совхозсене уйхир ӗҫӗсенче чӗрӗ туртӑм вӑйӗпе туллин усӑ курмалла тума, лашасемпе тата вӑкӑрсемпе шалти хуҫалӑх ӗҫӗсенче усӑ курассине чакарма, ҫурхи ӗҫсем валли тирлӗ таран утӑ, концентратсемпе ытти тӗрлӗ апат-ҫимӗҫсем уйӑрса ҫирӗплетсе хума, лашасемпе вӑкӑрсене уйхир ӗҫӗсем пуҫланиччен виҫӗ эрне малтан вӑйлӑ апат ҫине кантарма тӑратма хушас.

9. Тракторсемпе транспорт ӗҫӗнче тата ытти уйхирти мар ӗҫсенче, МТС-сем валли горючи турттарнисӗр пуҫне, СССР Совнаркомӗ ирӗк памасӑр усӑ курма чарас.

II. Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстермелли мерӑсем ҫинчен

1. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ республикӑсемпе крайсенчи, облаҫсемпе районсенчи совет, парти тата ҫӗрӗҫ органӗсене ҫурхи уйхир ӗҫӗсем пуҫланиччен кашни колхозрах, агрономсемпе колхоз правленийӗсем тата опытлӑ колхозниксем пӗрле ӗҫлесе, 1944 ҫулта ҫуракине иртермелли тӗплӗ агротехникӑллӑ мероприятисем палӑртса хурассине пурнӑҫа кӗртме хушнӑ.

2. Кашни колхозпа совхозшӑн обязательнӑй йӗркепе тумалли ҫакӑн пек ӗҫсем палӑртса хурас:

а) пусуҫаврӑнӑшӗпе палӑртнӑ уйхирсенче мӗнпур культурӑсене тӗрӗс вырнаҫтарса тухмалла, пусуҫаврӑнӑшӗсем пулман ҫӗрте вара кӑҫал акакан культурӑна малтан ҫав культурӑшӑн лайӑх культура пулнӑ вырӑна акмалла;

б) ҫурхи уйхир ӗҫӗсене хӑвӑртрах пуҫлас шутпа, уйхире уламппа хӑмӑлтан, ҫумкурӑкӗсенчен тасатмалла. Кирлӗ пулсан, хӑмӑлпа ҫумкурӑкӗсене, пушара хирӗҫле мероприятисем йышӑнса, ҫунтарса ямалла;

в) тӑпрара нӳрлӗх ытларах сыхласа хӑварас тата ҫумкурӑкӗсене пӗтерес шутпа ҫуркунне тӑпрана лайӑх ӗҫлесе ҫемҫетмелле;

г) кашни ялхуҫалӑх культурине агротехникӑн чи лайӑх срокӗсенче тата вӑрлӑха тӑпрана лайӑх витӗнтерсе акса хӑвармалла;

д) тислӗкпе, кӗлпе, торфпа тата ытти тӗрлӗ вырӑнти удобренисемпе, пуринчен малтан, техникӑллӑ культурӑсемпе ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем акмалли вырӑнсенче, май килнӗ таран ытларах усӑ курмалла.

3. Партипе советӑн вырӑнти органӗсене, агроперсонала, колхозсен правленийӗсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене 1944 ҫулта ҫумкурӑкӗсемпе кӗрешес тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнма хушас. Ҫакна ӑна акас умӗн ҫӗре лайӑх ҫемҫетсе, тырпулсене вӑхӑтра ҫумласа, ретсем хушшинчи ӗҫсене вӑхӑтра туса иртерсе, йӑрансем ҫинчи, канавсенчи, ҫул хӗррисенчи, пушӑ выртакан ҫӗрсем ҫинчи ҫумкурӑкӗсене обязательнӑй йӗркепе ҫулса, ҫӗртмене иртерех сухаласа, ҫӗртме тунӑ уйхирсене ҫу каҫиччен кӑпка тытса тата вӗсене ҫумкурӑкӗсенчен тасатсах тӑрса пурнӑҫа кӗртмелле.

5. Кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫӗнчи районсенче, ҫавӑн пекех Ҫӗпӗрпе Казахстанри типӗ ҫанталӑк е ҫурма типӗ ҫанталӑк тӑракан районсенче тата ытти типӗ ҫанталӑкпа ҫурма типӗ ҫанталӑк тӑракан районсенче те туртӑм вӑйӗ тӗлӗшпе ӗҫ йывӑр пулнине шута илсе, тӑпрара нӳрлӗх сыхласа хӑвармалла тӑвас, ҫумкурӑкӗсемпе кӗрешес тата ҫуракине май килнӗ таран кӗскерех срокӗсенче туса иртерес шутпа, колхозсене, МТС-семпе совхозсене ҫуракин малтанхи кунӗсенче тӑпран ҫиелти сийӗ типсе пынӑ май ҫийӗнчех ҫапла тума сӗнес:

а) кӗрхи ҫӗртме тата хура ҫӗртме тунӑ, ҫавӑн пекех пропашкӑй культурӑсем пулнӑ участоксене, кӗркунне сухаласа хӑварманскерсене, 1 — 2 хут сӳрелемелле, ҫапла вара, тӑпрари нӳрлӗхе сыхлама унӑн ҫиелти сийне 1—2 сантиметр тарӑнӑш кӑпкалатмалла;

б) ҫуркунне сухаламалли тата ҫавӑн пекех ҫӗртме тумалли участоксенче нӳрлӗх тытса хӑварма ҫурхи малтанхи кунсенчех дискӑллӑ сӳресемпе 1 — 2 хут сӳрелесе, тулӑ акса тунӑ ҫӗрте усӑ куракан плугсемпе, культиваторсемпе, драпачсемпе тата вӑрӑм шӑллӑ сӳресемпе усӑ курса, 3—5 сантиметр тарӑнӑш ҫемҫетсе кӑпкалатмалла. Ҫак ӗҫе уйрӑм участоксенчи тӑпра мӗнле пулнине тата колхозсемпе МТС-че мӗнле ӗҫ хатӗрӗсем пуррине шута илсе тумалла;

в) тӑпрара нӳрлӗх тытса хӑварассишӗн тата ҫумкурӑксене пӗтерессишӗн кӗрешесси тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешес ӗҫре кирлӗ мероприятисенчен пӗри пулса тӑнине шута илсе, тӑпрара нӳрлӗх ытларах тытса хӑварас ӗҫре пӗтӗм тракторсемпе тата туртӑм вӑйӗпе туллин усӑ курмалла;

г) тымарлӑ ҫумкурӑкӗсем (пырсен, хӑях тата ытти те) нумай ӳсекен уйсене ҫуркунне чи малтан тата ҫӗре вӑхӑтлӑ тарӑн сухаламалла. Малтан кӑпкалатса ҫемҫетнӗ уйсене, вӗсенче тымарлӑ ҫумкурӑкӗсем ӳсмеҫҫӗ пулсан, пӗр ҫул хушшинче ӳсекен ҫумкурӑкӗсем (сӳсен—хирсӗлли) тата ытти те шӑтма ӗлкӗрнӗ пулсан, тырӑсем акас ӗҫе хӑвӑртлатас шутпа 10—12 сантиметр тарӑнӑш сухалама ирӗк парас, анчах тӑпрана лайӑх витӗнтерсе пымалла. Вӑл уйсене сухаланӑ хыҫҫӑнах сӳрелемелле. Анчах тӑпрана малтанах кӑпкалатса ҫемҫетмесӗр 10—12 сантиметр тарӑнӑш сухалама чарас.

5. Кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫӗнчи районсенче, ҫавӑн пекех типӗ тата ҫурма типӗ ҫанталӑк пулакан районсенче, Ҫӗпӗрпе Уралсӑр тата Казах ССР-ӗн ҫурҫӗрти облаҫӗсемсӗр пуҫне, кӗрхи ҫӗртме тунӑ ҫӗрте уйрӑм участоксенче, тӑпра пулса ҫитнӗ май, тырӑсем акма ҫӗр хатӗрлеме тата акма тытӑнмалла. Тырӑсем акнӑ чухне суха тӑвассине сӳрелес ӗҫсене пӗр вӑхӑтрах тумалла, ҫавӑн пекех тата ҫурхи тулӑ тата ытти ир акмалли культурӑсене акассине кая хӑвармалла мар. Ҫак ӗҫсене тунипе пӗрлех, малтан нӳрӗ ытлашши пулнине пула нӳрлӗх тытас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене тӑвайман участоксенче ҫӗре кӑпкалатмалла.

Ҫӗпӗрти, Уралти тата Казах ССР-ӗн ҫурҫӗрти облаҫӗсенчи ҫурма типӗ ҫанталӑк тӑракан районсенче, апрель уйӑхӗнче акнӑ пӗрчӗллӗ тырӑсем май уйӑхӗнче акнӑ тырӑсенчен пачартарах пулакан вырӑнсенче, тырӑсем акмалли ҫӗр лаптӑкне мӗн май килнӗ таранах ытларах сухалама тата сӳрелеме тӑрӑшмалла, май уйӑхӗнче сухаламалли участоксем ҫинче нӳрлӗхе витсе хӑвармалла, ҫурхи тулла, чи малтан кая юлса акмалли тулла, апрелӗн юлашки кунӗсенче акма тытӑнса майӑн 15—20-мӗшӗ тӗлне акса пӗтермелле. Асӑннӑ районсенче сӗлӗ акма майӑн иккӗмӗш вунӑкунлӑхӗнче тытӑнмалла. Асӑннӑ районсенче сӳсен, хӑй тӗллӗн ӳсекен кантӑр, армути тата ытти ҫумкурӑкӗсем ӳсекен участоксене ҫуркунне кӑпкалатса ҫемҫетнӗ хыҫҫӑн, май уйӑхӗнче ҫумкурӑкӗсем шӑтса тухсанах сухаламалла тата сухаланӑ хыҫҫӑнах акса хӑвармалла.

Тымарлӑ тата тымартан сарӑлакан ҫумкурӑкӗсем ӳсекен участоксене ҫуркунне ҫӗре вӑхӑтлӑ тарӑн сухаласа хӑвармалла.

6. Ҫӗпӗр, Урал тата Ҫурҫӗр Казахстан районӗсенче кая юлса акнӑ культурӑсем пиҫсе ҫитме ӗлкӗрейменнине е тата сивӗпе сиенленнине шута илсе, асӑннӑ районсенчи колхозсемпе совхозсене ҫуракине июнӗн 10-мӗшӗччен вӗҫлеме хушас.

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе облисполкомсене ҫанталӑк типӗ тӑракан районсенче ҫурхи культурӑсене акассине вӗҫлемелли сроксене ҫанталӑк мӗнле пулнине шута илсе тӑрӑх ҫирӗплетсе пама ирӗк парас.

7. Ҫурхи ҫӗртме умӗн тӑпрана кӑпкалатса ҫемҫетес, нӳрлӗх тытас ӗҫсене вӑхӑтра туса иртерес шутпа, облаҫсемпе крайсен исполкомӗсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене, колхозсемпе совхозсене тата МТС-сене тӑпрана ҫемҫетнӗ ҫӗрте лашапа ӗҫлемелли ӗҫ хатӗрӗсем — лущильниксем, дискӑллӑ сӳресем, тулӑ акса тунӑ ҫӗрте усӑ курмалли плугсем, культиваторсем, драпачсем, тимӗр шӑллӑ вӑрӑм сӳресем т. ыт. те тупса парас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма хушас.

Вырӑнти промышленность предприятийӗсене, МТС-сене, МТМ-сене, совхозсемпе колхозсен тимӗрҫ лаҫҫисене тӑпрана ҫемҫетмелли ӗҫ хатӗрӗсене (драпачсене, сӳресене т. ыт. те) юсас, ҫӗнӗрен тӑвас тӗлӗшпе панӑ заданисене ҫирӗплетес.

8. Техникӑллӑ тата пахча-ҫимӗҫ культурисем акма уйӑрнӑ участоксене, унта ҫӗртме сухи туман пулсан, ҫурхи ирхи сроксенче тарӑнӑн сухаласа хӑвармалла.

9. Кӗркунне акса хӑварнӑ культурӑсене ҫуркуннехи вӑхӑтра лайӑх пӑхса усрани пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине палӑртса, райисполкомсемпе парти райкомӗсене, колхоз правленийӗсене тата совхозсен директорӗсене кӗрхи тырӑсене ҫуркунне сӳреме тата ҫумлама хушас. Кӗрхи культурӑсене пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене ҫураки вӑхӑтӗнчи ӗҫ планне кӗртмелле.

10. Ҫумкурӑкӗсене пӗтерессишӗн кӗрешес ӗҫе ӑнӑҫлӑн организацилес шутпа, облаҫсемпе крайсен исполкомӗсене, республикӑсен Совнаркомӗсене, ВКП(б) Обкомӗсемпе крайкомӗсене тата партин союзлӑ республикӑсенчи Центральный Комитечӗсене 1944 ҫултан пуҫласа колхозсемпе совхозсенче Вильямс академик тӑпрана кӑпкалатса ҫемҫетес тӗлӗшпе тума сӗннӗ ӗҫсене, ҫавӑн пекех ҫанталӑк типӗ тулман районсенче хура ҫӗртме тата тата ҫӗртме сухисене сийӗ-сийӗпе тӑвассине анлӑн сарас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма хушас.

11. Колхозсем агрономсемпе тунӑ агротехникӑллӑ мероприятисене, ҫав мероприятисене тунӑ агроном е тата районри ҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ ирӗк памасӑр, пӑрахӑҫа кӑларма е улӑштарма никама та ирӗк парас мар.

12. СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халӑх Комиссариатне, республикӑсен Совнаркомӗсене тата крайсемпе облаҫсен исполкомӗсене, обкомсемпе крайкомсене тата союзлӑ республикӑсенчи компартисен Центральный Комитечӗсене ҫак ӗҫсене тума хушас:

а) ҫуркунне акмалли вӑрлӑхсене пӗтӗмпех тата вӑхӑтра хывмалла, вӗсен пахалӑхне тата мӗнле пӑхса усранине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла;

б) начар шӑтакан вӑрлӑхсене лайӑх пахалӑхлӑ вӑрлӑхсемпе улӑштарассине организацилемелле;

в) вӑрлӑх фончӗсене пур культурӑсем тӑрӑх та пӗтӗмпех тасатса, сортласа, ҫирӗплетсе панӑ кондицие ҫитермелле;

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

СССР СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

(Юлашки)

г) тулă, урпа, сĕлĕ, вир, йĕтĕн тата çĕрмамăкĕн вăрлăхĕсене вăхăтра та пĕтĕмпех тĕрлĕ имçамсемпе чÿхесе тасатмалла;

д) колхозсенче вăрлăхсем мĕнле шăтассине, нÿрлĕхне, вĕсем мĕн таран таса пулнине, пăсăлнипе пăсăлманнине тĕрĕслесе тухмалла;

е) вăрлăхсем нÿрлĕх тĕлĕшĕнчен кондицие ларман пулсан, анчах вĕсем шăтма пултараççĕ пулсан, вĕсене çуркуннехи вăхăтра Лысенко академик кăтартса панă пек çÿхен сарса хурса çилпе уçăлтармалла, ун хыççăн вара вĕсем мĕнле шăтнине лабораторисенче тепĕр хут тĕрĕслесе пăхмалла.

13. Колхозсенче вăрлăх туса илес ĕçе татăклăнах лайăхлатас шутпа çаксене тумалла:

а) колхозсенчи вăрлăх участокĕсене тырăсем акас умĕн лайăх хатĕрлесе çемçетнĕ çĕр çинче тумалла, вăл участоксем тавра чикĕсем тумалла;

б) СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, крайсемпе облаçсен исполкомĕсене, республикăсен Совнаркомĕсене вăрлăх участокĕсене акнă чухне тата çав участоксене акса хăварнă тырăсене пăхса ÿстернĕ чухне агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса пыма хушас.

Вăрлăх участокĕсенчи тырăсене лайăх пăхса ÿстерес шутпа, вĕсене ятарласа тунă звеносем çумне çирĕплетмелле;

в) районсенчи çĕрĕç пайĕсен штатне вăрлăх туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен агронома кĕртес, ун çине колхозсенчи вăрлăх участокĕсене мĕнле тытса тăнине тĕрĕслесе тăрас ответлăха хурас.

14. Çĕпĕрти, Уралти, кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи, Казахстанри республикăсемпе крайсенчи тата облаçсенчи советпа парти органĕсене çитес 1—2 çул хушшинче çурхи тулă акса тăвас ĕçе йĕркелесе яма кирли çине тимлĕн çавăрăнса пăхма хушас. Çакна пурнăçа кĕртес шутпа çурхи тулла кĕрхи çĕртме тата таса çĕртме тунă вырăнсенче мĕн май килнĕ таранах нумайрах акмалла. Асăннă районсенче кĕрхи çĕртме тунă çĕр лаптăкĕ çине сахăр кăшманĕ, хĕвелçаврăнăш, çĕрулми тата пахча-çимĕç культурисем акнă хыççăн юлнă участоксене пĕтĕмпех çурхи тулă акмалла.

Çурхи тулă акас ĕçе йĕркелесе ярас шутпа, колхозсене 1944 çулта çурхи тулă акнă пĕтĕм лаптăкăн 18 процентне вăрлăх участокĕсем тума уйăрса илме ирĕк парас. Çурхи тулăн вăрлăх участокĕсене тунă чухне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче кăларнă постановлени тăрăх çирĕплетсе панă ытти культурăсен вăрлăх участокĕсен хисепне чакармалла мар.

15. Тракторисчен уйхир ĕçĕсене кăвартлатас тата тракторсемпе усă курассине лайăхлатас ĕçсенчи интересĕсене ÿстерес тĕлĕшпе çаксене тăвас.

а) тракторисчене çураки вăхăтĕнче 15 кунхи заданисене пурнăça кĕртнĕшĕн премисем памалли йĕркене 1944 çул валли те çаплипех хăварас;

б) 1944 çулта çураки вăхăтĕнче малтанхи 6 кун хушшинче суха тунă çĕрте ĕçлекен тракторисчене ĕçкунĕ икĕ хут ытларах парас тата çунтармалли япалассен расходне 10 процент ÿстерсе памалли йĕркесене Совет Союзĕн пур районĕсене те сарас.

16. Çĕрулми, пахча-çимĕç тата ытти культурăсем тухăçлăн туса илес шутпа, кашни çуллен (уйрăмах çанталăк типĕ тăнă çулсенче) акмалли страховой участоксем тăвас тесе Саратов, Куйбышев, Сталинград, Чкалов облаçĕсенчи колхозсемпе совхозсем умне çитес 2—3 çул хушшинче хăйсен вăйĕпе çырмасемпе юхан шывсене пĕвелес, кивĕ пĕвесене тасатас задача лартас, çапла вара, çав пĕвесенчи шывсемпе усă курса кашни колхозра тата совхозра çĕрулми, пахча-çимĕç тата ытти культурăсем акмалли 5—15 гектар чухлĕ шăварса тăмалли участоксем тăвас.

1944 çулта çакăн чухлĕ пĕвесем тума план çирĕплетес: Саратов облаçĕ тăрăх — 400 колхозра, Сталинград облаçĕ тăрăх — 350 колхозра, Чкалов облаçĕ тăрăх — 380 колхозра тата Куйбышев облаçĕ тăрăх — 200 колхозра.

Асăннă облаçсен исполкомĕсемпе партя обкомĕсене 1944 çулхи мартăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕвесем тума тата шăвармалли участоксем уйăрма тивĕçлĕ колхозсене палăртса çирĕплетме, 1944 çулта шăвармалли участоксене районсем тăрăх, районсенче — колхозсем тăрăх çирĕплетсе пама хушас.

17. ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Совхозсен Халăх Комиссариатне, республикăсен Совнаркомĕсене, крайсен тата облаçсен исполкомĕсене МТС-семпе совхозсем валли трактор плугĕсен малта касса пыракан çĕççисене кирлĕ таранах тупса пама хушас. Малта касса пыракан çĕçĕсем лартнă плугсемпе сухаланă чухне çунтармалли япаласене çĕçĕсемпе усă курмасăр сухаланă чухнехиччен 6 процент ытларах памалла тăвас.

III. Çĕрмамăк тухăçлăхне ÿстермелли мероприятисем çинчен

1. Çĕрмамăкĕ туса илес ĕçре агротехника япăхнине тата çавна пула унăн тухăçĕ чакнине палăртса, Узбек, Таджик, Туркмен, Казах, Киргиз, Азербайджан тата Армян ССР Совнаркомĕсемпе компартисен Центральный Комитечĕсене 1944 çулта çак мероприятисене пурнăça кĕртме хушас:

а) çĕрмамăкĕ акма уйăрнă уйсене, çĕртме сухи туман пулсан, çуркуннехи вăхăтра икĕ хут сухаламалла, çĕртме сухи тунă уйсене пĕр хут сухаламалла, ун хыççăн хытнă тăпрана кăпкалатмалла;

б) çĕрмамăкĕ акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 60 процентне (трактор çумне кăкарса ĕçлемелли сеялкăсемпе акмалла. Çак çĕр лаптăкне пĕтĕмпех тракторпа культиваци тумалла, çак хисепĕн 40 процентĕнчен кая мар тăпрана тракторпа е лашапа ĕçлемелли машинăсемпе кăпкалатса çемçетмелле;

в) çĕрмамăкне сайралатса тухассине вăхăтра та лайăх пахалăхпа туса ирттермелле, тăпра пахалăхне кура, пĕр гектар пуçне 75—100 пин ÿсен-тăранран кая мар пулмалла; акнă участоксенче çĕрмамăкĕ майăн 5—10-мĕшĕнчен кая юлмасăр шăтмалла тăвас пулать тата çĕрмамăкне сайралатассине майăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле;

г) акса пĕтернĕ хыççăнах çĕрмамăкне пăхса ÿстерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăнмалла. Ÿснĕ вăхăтра акнă участоксене 4 хутчен кая мар катмакпа çемçетмелле, 5 хутран кая мар тарăнăн культиваци туса ирттермелле; çĕрмамăкĕ акнă участоксене пирвайхи хут катмакпа çемçетес тата культиваци тăвас ĕçсене майăн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр, иккĕмĕш хут çемçетес ĕçсене июлĕн 1—5-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле;

д) çĕрмамăкне, çирĕплетнĕ нормăсен хисепĕне, йăрансем тăрăх шăвармалла. Шăварнă хыççăн тăпра типсе ĕлкĕриччен çĕрмамăк акнă участоксене çемçетсе тухмалла, çак ĕçе тăпра пиçсе çитнĕ вăхăтра, çĕрмамăк айĕнчи тăпра вăтам нÿрлĕхлĕ чухне тумалла; çĕрмамăкне шыв пусса илмелле чухлех шăвармалла мар, çавăн пек шăваракансене ответ тыттармалла. Шăварма кирлĕ шыва перекетлĕн тыткалас шутпа, шăвармалли çĕрсене вăхăтра йĕркелесе тухмалла.

2. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çывăх вăхăтрах шăвармалли çĕрсене мелиораци тĕлĕшĕнчен лайăхлатас, вĕсене сÿп-çапсемпе тултарассине тата шурлăхлантарса ярассине хирĕç кĕрешес, шăвармалли хатĕрсене лайăхлатас тесе, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, союзлă республикăсен Совнаркомĕсемпе союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çакăн пек мероприятисем туса ирттерме хушаççĕ:

а) 1944 çулта халиччен пулнă шывсем юхмалли каналсене тасатса юсамалла, малашне вĕсене вăхăтра тасатса юсаса тăмалла; шăвармалли мĕнпур хатĕрсене йĕркене кĕртмелле тата гидротехникăллă сооруженисене юсамалла;

б) шăварса çемçетмелли уйрăм системăсем тăрăх тата пуринчен малтан çĕр тăварланса е шурлăхланса каякан районсенче, тăпра условийĕсене, агротехникăна тата тырпул тухăçлăхне шута илсе, шăвармалли нормăсемпе сроксене уйрăмшарăн пăхса тухса, 1944 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр çирĕплетмелле;

в) çĕрмамăкĕ акса тăвакан районсенче риса ăçта вырнаçтарса акассине пăхса тухмалла, çĕрмамăкĕ талккишĕн акнă вырăнсенче, çавăн пекех тата тăварланса е шурлăхланса каякан çĕрсем çинче рис акма чармалла. Риса çĕрмамăкĕ акнă вырăнсенчен уйăрса тăракан тата çиелти шывсемпе тăпра айĕнчи шывсене уçса яма май пур çĕрсем çине акмалла;

г) шыв хуçалăх органĕсене мĕнпур специалистсене — водниксене, республикăри организацисен решенийĕсем тăрăх ытти предприятисемпе стройкăсене янă скерсене, çавăн пекех тата автомобильсемпе гужевой транспорта каялла таварса памалла, шыв хуçалăхĕн работникĕсене ытти организацисене куçарма малашне чармалла;

д) шăварса тăракан çĕрсене сийленме май парас тата тăпра айĕнчи шывсен вирине чакарас шутпа, агротехникăпа мелиораци мероприятийĕсем туса ирттерессине, çавăн пекех тата тăпра айĕнчи шывсен виçине сăнаса тăрассине, шыва уçса ямалли тата коллекторнăй канавсем мĕнле ĕçленине сăнаса тăрассине, шăваракан çĕрсем мелиораци тĕлĕшпе мĕнле тăнине контрольлесе тăрассине вăйлатмалла;

е) шăвармалли, шыв уçса ямалли тата коллекторнăй канавсене тасатас ĕçре колхозниксен ĕçне çăмăллатас тата механизациллĕ ĕçсен шайне ÿстерес шутпа, СССР Наркомземĕн мĕнпур экскаваторсен паркне тата республикăсенчи шыв çулĕсене тасатмалли ытти машинăсене шыв уçса ямалли тата коллекторнăй канавсем тунă çĕре, вĕсене тасатнă çĕре ĕçлеме куçармалла. Экскаваторсен паркне тата шыв çулĕсене тасатакан ытти машинăсене шăвармалли хуçалăх нушисемпе çыхăнман ĕçсенче ĕçлеттерме татăклăнах чармалла.

IV. Сахăр кăшманĕн тухăçлăхне ÿстермелли мероприятисем çинчен

1. Сахăр кăшманĕн тухăçлăхне ÿстерес шутпа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ республикăсен Совнаркомĕсене, ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен крайсемпе облаçсенчи исполкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене 1944 çулта сахăр кăшманĕ акса тумалли агротехникăна тĕрĕс йĕркелесе яма хушнă, çав шутпа çакăн пек мероприятисене пурнăça кĕртмелле:

а) фабрикăсене каякан сахăр кăшманне сахăр кăшманĕ илекен пунктсенчен 20 километртан аякра мар тăракан вырăнсенче акмалла, шоссе çулĕсем пур районсенче сахăр кăшманĕ акмалли радиуса 25 километра çити ÿстерме юрать. Уйхир бригадинчи пĕр колхозник пуçне сахăр кăшманĕ 0,8 гектартан ытла акмалла мар, çавăн пекех тата сахăр кăшманĕ акса тăвакан колхозсене ытти техникăллă культурăсем ытлашши нумай акса тултарма хушмалла мар;

б) сахăр кăшманĕ акма çумкурăкĕ пусса илмен чи лайăх участоксене тата пуринчен ытларах çĕртмере тислĕк тăкса çемçетнĕ участоксене уйăрса памалла. Çакăнпа пĕрлех сахăр кăшманне, ялан тенĕ пекех, кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине, кĕрхи çĕртме тунă çĕр çителĕксĕр пулсан вара, çуркунне иртерех тата 20 сантиметртан ăшăх мар сухаланă çĕр çине акса хăвармалла;

в) сахăр кăшманне 6—7 кун хушшинче, ир акакан çуртыррисене акнă вăхăтрах, ĕçе вăраха ямасăр тата тăпрана типĕтсе ямасăр, акса хăвармалла;

г) çуракине тухиччен кашни колхозрах вырăнти удобренисем (тислĕк, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ) кирлĕ таран хатĕрлесе хумалла, вĕсене сахăр кăшманĕ акмалли участоксем çине турттармалла, колхозри тата аякран кÿрсе килекен минераллă удобренисемпе те, пуринчен малтан, сахăр кăшманĕ акакан участоксене çемçетнĕ çĕрте усă курмалла;

д) мĕнпур акнă сахăр кăшманне вăхăтра тата лайăх пăхса тăрас ĕçсене çак сроксенче туса ирттермелле: сахăр кăшманĕ шăтса тухса ретсем палăрсанах шаровка тумалла; 1—2 мăшăр чăн-чăн çулçăсем аталансан кăпкалатмалла, кăпкалатнă хыççăн 3—4 мăшăр çулçă тухсан тĕрĕслесе ирттермелле. Сахăр кăшманне пухса кĕртмелли вăхăт тĕлне кашни гектар çинче сахăр кăшманĕ 90.000 тĕпрен йăвă пулмалла мар. Тĕрĕсленĕ хыççăн ик-виçĕ хутран кая мар ретсем хушшинче тарăнăн кăпкалатса тухмалла тата çум çумламалла. Сахăр кăшманне сиенлекен хурткăпшанкăсемпе тата чир-чĕрсемпе тăтăшах кĕрешмелле.

Сахăр кăшманне тирпейлесе пăхса тухассине ир пулакан тĕштырăсене вырма тытăниччен ĕлкĕртмелле, малалла вара сахăр кăшманĕ акнă уйхире çумкурăкĕсенчен тасатсах тăмалла;

е) шăваракан районсенчи сахăр кăшманĕ акса тăвакан колхозсенче 5—7 хутран кая мар вегетаци йĕркипе шăварса тухмалла, кашни шăвармассеренех ретсем хушшинче обязательнăй йĕркепе кăпкалатса тухмалла.

2. Республикăсен Совнаркомĕсен, крайсемпе облаçсенчи исполкомсен сахăр кăшманĕн тухăçлăхне ÿстермелли тата сахăр кăшманне сиенлекен хурткăпшанкăсемпе чир-чĕрсене хирĕç кĕрешмелли мероприятисем çинчен, вырăнти условисене кура, обязательнăй постановленисем кăлармалла.

* * *

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: 1944 çулта çуракине вăхăтра туса ирттересси тата вăйлă тырпул туса илесси — Хĕрлĕ Çарпа халăха продовольстви, промышленноçа чĕртаварсем парса тăрас ĕçре советсемпе парти организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен, колхозсен, МТС-семпе совхозсен, коммунистсемпе комсомолецсен, агрономсен, колхозниксемпе колхозницăсен, рабочисемпе служащисен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи паха задачи пулса тăрать.

Художествăллă пултарулăх смотрĕ вĕçленчĕ

Мартăн 13-мĕшĕнче Искусство ĕçĕсен комитечĕн ларăвĕнче профсоюзсен пĕтĕм çĕршывĕпе пулса иртнĕ художествăллă пултарулăх смотрĕн итогĕсене сÿтсе явнă.

Смотр вăхăтĕнче кружоксен членĕсен хисепĕ икĕ хут ÿснĕ. Смотрта пуринчен ытларах палăрнă çынсене филармоние, театр студийĕсене, театр шкулĕсене янă. Азербайджанри, Новосибирскри, Саранскри, Уральскри тата ытти хуласенчи уйрăм коллективсене профессиллĕ театрсем, профессиллĕ хор ансамблĕсем туса хунă. Смотр çитĕнĕвĕсенчен пĕри вăл — репертуар палăрмаллах лайăхланни пулса тăрать.

Смотра хатĕрленсе ирттерес ĕçе искусство мастерĕсем пин çурă çын ытла хутшăннă. (ТАСС).

Суракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Уйăхлăхра тунă ĕçсем

СОВЕТСКОЕ, мартăн 15-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Подаркари Энгельс ячĕпе тăракан колхоз февраль уйăхне çитсе те çуракине хатĕрленме тытăнман. Председатель вырăнĕнче ĕçленĕ Г. Герасимов юлташ кăçалхи вăйлă тырпулшăн тăрăшман. Колхозниксен пухăвĕ халĕ Г. Герасимова председательтен кăларнă. Ун вырăнне Отечественнăй вăрçă инвалидне, ВКП(б) членне Прокопий Муськов юлташа суйланă. Бригадирсем те хастарлă хĕрарăмсем —А. Григорьева, Л. Трофимова, Т. Макарова тата П. Ярушкина юлташсем.

Çĕнĕ çынсем çĕнĕ вăйпа ĕçе тытăннă. Çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăха активлăн хутшăнса, колхоз чылай ĕçсем тунă. Вăрлăхсене, кăвервсăр пуçне, çителĕклĕ хатĕрленĕ. Сĕлĕ, тулă, пăри вăрлăхĕсене триерпа сортланă. Пăрса вăрлăхне 25 центнер алăпа суйланă. Пур ĕçре те пултаракан колхозница Елизавета Смирнова хăйĕн ачисемпе пĕрле 22 пăт пăрçана алăпа суйланă. Çавăншăн вăл 110 ĕçкунĕ илнĕ.

Ялхуçалăх машинисене те хатĕрлесе çитереççĕ. Тимĕрçĕ С. Тихонов юлташ, вăрçă инваличĕ пулин те, кунсеренех 3—4-шар плуг юсать. Çапла вăл эрне хушшинче 28 плуг юсанă. Юсамалли пĕр сеялка çеç юлнă, унăн запаслă пайĕсем çук. Сÿресем хатĕр, кÿлме кирлĕ вĕрен-пăявсемпе урапа тавраш сем те çителĕклĕ. Çак кунсенче колхозниксем çĕнĕрен 50 пăяв явнă, темисе хăмăт юсанă.

Турттăм вăйĕ çураки ăнăçлăхне татса парать. Кунта лашасене, хуçасăрла тытса, пăхса пĕтернĕ шутлă. Халĕ лаша тÿрĕчĕсене юсаса çитереççĕ ĕнтĕ. Вăтă лашасене вăй илме талăкра пĕрер килограмм сĕлĕ параççĕ. Çураки вăхăтĕнче тăрантарма икĕ капан утă, кашни лаша пуçне 6-шар пăт фураж уйăрса хунă. Анчах калас шулать, лашасене пăхас ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Утă-улăма, тирпейлĕ тыткалас вырăнне, вите умне юр çине тăкса параççĕ. Лашасем вара апата таптаса юрăхсăра кăлараççĕ. Правлени енчен ку тĕлĕшпе тĕрĕслÿ кирлех.

Колхоз вырăнти удобренисем хатĕрлемелли плана пĕтĕмпех тултарнă. Çапах та уя кăлармалли тислĕк тепĕр 1000 лава яхăнах выртать.

— Çапла, пирĕн çав тислĕке кăларса пĕтермелле, урапасем хатĕрлемелле, клевер вăрри тупса çитермелле. Вăл ĕçсене эпир уйăхлăх иртиччен туса çитерме шутлатпăр, — тет колхоз председателĕ Муськов юлташ.

Т. ИВАНОВ.

Çуракине вăйлăн хатĕрленеççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакасси ялсоветне кĕрекен «Коминтерн» колхозра (председателĕ Тенькин юлташ) çуракине вăхăтра хатĕрленессине чи ответлă ĕç вырăнне хураççĕ. Вăрлăхсене çителĕклĕ таранах хывнă, вĕсене сортласа хунă, шăтас пахалăхне те сăнанă. Плугсене, сеялкăсене тахçанах юсаса пĕтернĕ. Урапасем тата пур тĕрлĕ ут тавраш ĕсем ытлашшипех çитеççĕ.

«Коминтерн» колхоз членĕсем хаяль вырăнти удобренисене тата тислĕке уя кăларас çĕрте ырми-канми ĕçлеççĕ. Паянхи куна тĕлне уя 2.500 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре кашни кунах 6—8 лаша ĕçлет. Лаша витисемпе ферма картишĕсенчен тислĕке тасатсах тăраççĕ. Кунсăр пуçне 73 центнер кĕл, 35 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Вырăнти удобренисем хатĕрлес тата уя тислĕк кăларас ĕçре уйрăмăнах иккĕмĕш бригада (бригадирĕ Моисеев) малта пырать.

И. ТРИФОНОВ.

Шишкин кама улталать-ши?

ИШЛЕЙ. Çураки ăнăçлă тата пысăк пахалăхпа иртĕр тесен, хатĕрленÿ ĕçĕсене тимлĕн тума кирли пуришĕн те паллă. Анчах Сыпайкасси ялсоветĕнчи «Труд» колхоз председателĕ Шишкин юлташ райçĕрĕç пайне суя сводкăсем пачипех лăпланса парать.

Райçĕрĕç пайне панă сводка тăрăх, «Труд» колхозра «çуракине хĕрсе хатĕрленеççĕ». Тĕрĕслесе пăхăр, ĕçе пачах урăхла. Сводка тăрăх кунта... 50 гектар çинче юр тытнă, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата ытти удобренисем килогрампа мар, темиçешер тонна пухса хатĕрленĕ. Чăннипе илсен, уйхирте юр тытнă ĕçе тата хал тытнă, вырăнти удобренисене пухма тытăнман та.

— Эпир кĕл пухмасăрах вăйлă тырпул туса илетпĕр,—тет халь Шишкин юлташ. Вăл райçĕрĕç пайĕ панă планне хирĕçлесе, вĕсене пурнăçламасăр тăма пăхать.

Вăрлăх тасатса пĕтермен. 20 центнер тулă кирлĕ, ăна алăпа пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа тасатма пăхнă, анчах ĕçĕ çук, мĕн пурĕ те 2 центнер çеç суйласа хунă.

Ялхуçалăх машинисем паян кун та юр айĕнчех лараççĕ. Лашасене пăхас ĕç те япăх.

Колхозрах чунтан тăрăнса ĕçлекен çынсем нумай. Анчах Шишкин юлташ вĕсене итлемест, вĕсемпе çыхăнма тăрăшмасть.

Çуракине çине тăрса хатĕрленес вырăнне, райçĕрĕç пайне суйса пĕлтерсе, Шишкин кама улталасшăн-ши? Çакăн пек киревсĕрлĕхе халех пĕтермелле.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе сÿрĕклетнĕ

Çуллахи вăхăтра Çĕмĕрле районĕнчи «Большевик» колхозри пуçламĕш парторганизаци колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх туса пыратчĕ. Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра кашни бригадăрах агитаторсемпе вулавçăсем пулнă, вĕсем кашни кун колхозниксене çĕршывра пулса иртекен хыпарсемпе паллаштарнă, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа панă. Кунсăр пуçне кашни бригадăрах боевой листоксем, стена хаçачĕсем туса тăнă, кăтарту хăми те пулнă. Анчах юлашки вăхăтра кунта агитаципе пропаганда ĕçне пачах сÿрĕклетни сисĕнет. Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ бригадăсене агитаторсем пымаççĕ.

Колхоз правленийĕпе пĕр çуртрах конюхсем пурăнаççĕ. Чылайăн вĕсем, 10—12 çынтан та иртет. Анчах вĕсем çĕрĕпех вăхăта ахаль ларса ирттереççĕ.

— Тем пекехчĕ çакăнта пире фронтри хыпарсем çинчен каласа кăтартсан. Эпир вĕт хаçат-журнал вуламастпăр,— теççĕ конюхсем.

Колхозра, çавăн пекех бригадăсенче те чылайранпа стена хаçачĕсем, боевой листоксем тухмаççĕ, кăтарту хăмисем те çук.

Колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе япăх организациленни колхоз ĕçĕнче те палăрма пуçларĕ. «Большевик» колхоз çуракине япăх хатĕрленет. Паянхи куна унăн вăрлăх та çитмест, пуррине те сортласа пĕтермен, шăтарса та пăхман. Ялхуçалăх инвентарĕсем юсавлă мар, уйрăмах лаша тавраш ĕсем япăх. Ку çеç те мар, колхозра уйăхлăх хут çинче çеç пулса пырать. План тăрăх уя 3.000 тонна тислĕк кăлармалла, ку таранччен çуррине çеç кăларнă, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухасси те япăх пырать.

«Большевик» колхоз — Çĕмĕрле районĕнчи пысăк колхозсенчен пĕри. Унта 8 бригада. Кунта парторганизацисĕр пуçне комсомол организацийĕ те, учительсем те, вулав çурчĕ те пур. Анчах парторганизаци вĕсене ертсе пымасть. Активпа тачăн çыхăнса ĕçлесен, паллах, ĕçсем те урăхла пулмалла. Парторганизаци хăйĕн ĕçне хăвăртрах лайăхлатма тивĕçлĕ.

Х. ЛИСИН.

Выльăх-чĕрлĕхрен ытларах тупăш илессишĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Наратчакки ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхозăн ĕне, сурăх, сысна, хур тата чăх-чĕп фермисем пур. Вĕсене 12 çын пăхать. Фермăра ĕçлекенсем тăрăшнипе колхоз иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăхсем енĕпе те ытлашшипех тултарчĕ. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те ÿссех пырать. Ĕне фермине ĕçлекен М. Горбунова юлташ хăй пăхакан 13 ĕнерен кашниченех пăру илсе, вĕсене пурне те çитĕнтернĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 75 литр сĕт тÿленĕ. Чăх-чĕпсем пăхакан Е. Димитриева юлташ та кашни чăхран 80-шар çăмарта илнĕ. Сурăх фермине ĕçлекен А. Добронравовăпа Л. Чайкова юлташсем 55 сурăхран планпа 117,1 килограмм çăм илмелле пулнă пулсан, вĕсем 166,5 килограмм илнĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх вĕсене 4,3 килограмм çăм тата тирсем панă.

Фермăрах вăкăрсене кÿлме вĕрентеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах ферма заведующийĕ А. Смирнов юлташ тăрăшса ĕçлет. Паянхи куна 6 вăкăра кÿлме вĕрентнĕ. Вăл вăкăрсемпе халĕ вутă, шыв кÿреççĕ, фермăри ытти ĕçсенче те усă кураççĕ.

А. Смирнов юлташ фермăра ĕçлеме пуçланăранпа пĕр выльăх та вилмен пулман. Смирнов юлташ «Молния» колхозăн фермисен заведующийĕпе А. Борисова юлташпа ăмăртса ĕçлет. Çак ăмăртура вĕсем иккĕшĕ те пĕр-пĕринчен юлмаççĕ. «Молния» колхозра иртнĕ çулта кашни сăвакан ĕнерен 1.050 литр сĕт суса илнĕ, çамрăк пăрусене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтернĕ. Выльăхсен йышне тата вĕсен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕн Борисова юлташа колхоз 325 литр сĕт, 1,8 килограмм çăм тата 21 штук çăмарта ĕçшĕн хушса тÿленĕ.

И. АНДРЕЕВ.

Комбинат ĕçĕ лайăхланать

Ишлейри апат-çимĕç комбиначĕ çĕнĕха. Вăл иртнĕ çура промкомбинатран уйăрăлнă. 6—7 уйăх хушшинче сăра, брага, кăвас пĕçерме, сироппа варени тума вĕренсе çитнĕ. Çур çулхи производство планне 127 процент тултарнă.

Нумай пулмасть апат-çимĕç пĕçермелли çĕнĕ цех лартрĕç. Унта халь сироп та сăра тăваççĕ. Кăçал комбинатăн хăйĕн подсобнăй хуçалăх пулать. 14 гектар çурă çĕр уйăрса панă. Унта çĕрулми, пахча-çимĕçсем лартаççĕ.

Комбинат ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Хатĕрленĕ вутта çийĕнчех турттарайман пирки, вăхăтăн-вăхăтăн ĕç чарăнса тăрать. Вутă турттарас тĕлĕшпе комбинат управляющийĕн Д. Халапсин юлташăн тăрăшарах ĕçлемелле.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИПЕ АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН СĔНĔ ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем Украинăра Совет çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пыни çинчен калакан хыпарсене курăнмалла вырăнта пичетлеççĕ. «Санди таймс» хаçат çав операцисене çак вăрçăри чи пысăк çĕнтерÿ вырăнне хурать, вырăссем хăйсен стратегиллĕ мастерлăхĕпе тĕлĕнмелле ĕçсем тунă пирки нимĕçсем хăраса ÿкнĕ, тет. Хаçат малалла çапла çырать. «Украинăри çапăçу вăл питĕ кăтартуллă. Вăл çакна кăтартса парать: питĕ лайăх хатĕрлесе хунă плансем сирме çук тесе шутланă чăрмавсене те сирсе яма пултараççĕ».

Лондонри радио совет çарĕсем Украинăра çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыни çинчен нумай калать.

Германи çар командованийĕ, — тенĕ пĕр радиопередачăра, — вырăссем çав тери вирлĕн, çав тери хытă пырса çапнипе хăраса ÿкнĕ. Нимĕçсем çурхи шыв-шур вăхăтĕнче фронтра лăру-тăру лăпланĕ тесе шанса тăнă, анчах халь çав шанчăк пĕтсе ларчĕ.

Лондонри радио тата çакна палăртать: «вырăс çарĕсем сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлеççĕ», Хĕрлĕ Çар нимĕçсемшĕн чи начар вăхăтра наступлени пуçласа ячĕ. Гитлер çурхи çумăрсемпе шыв-шур вырăссене вăйлă наступлени тума кансĕрлĕç тесе шанса тăнă. Гитлерăн çав шанчăкне вырăс çарĕсем пĕтерсе лартрĕç.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар çарĕсем çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыни çинчен нумай çыраççĕ. Çак наступлени Германи çарĕсене пысăк хăрушлăх умне илсе пырса тăратать, теççĕ. Вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракансем нумайĕшĕ уйрăмăнах çакна палăртаççĕ: Хĕрлĕ Çар Украинăра çурхи шыв-шура тата вырăн меллĕ маррине пăхмасăрах ăнăçлăн наступлени сарса янă. Нумай хаçатсем çапла шутлаççĕ: Украинăн кăнтăр пайĕнче Германи çарĕсем умне Сталинград мĕлки тухса тăчĕ, теççĕ.

ГИТЛЕР ÇАРСЕН УШКĂНĔСЕН КОМАНДУЮЩИЙĔСЕНЕ КЛЮГЕПЕ КЮХЛЕРА ВЫРĂНТАН КĂЛАРНА

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Лондона çитнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлер Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи нимĕç çарĕсен ушкăнĕсен виçĕ командующийĕнчен иккĕшне вырăнтан кăларнă. Фронтăн çурçĕр участокĕнче фон Кюхлера вырăнтан кăларса, ун вырăнне Модель генерала лартнă (фон Кюхлер çарĕсене Хĕрлĕ Çар нумаях пулмасть Ленинград патĕнчен сирпĕтсе янăччĕ). Центрти участокра фон Клюгене вырăнтан кăларнă, ун вырăнне Буш фельдмаршала лартнă. Виççĕмĕш командующие Манштейна çеç вырăнтан кăларман. Вăл — кăнтăрти участокра. Çапла шутлаççĕ: Украинăри хальхи йывăр условисем вăхăтĕнче Гитлер фронтăн кăнтăр участокĕнчи çарсен ушкăнĕн командующине вырăнтан кăларма хăрать, теççĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн пур участокĕсенче те патрульсем кĕрешнĕ.

Ĕнер союзниксен бомбардировщикĕсем тăшманăн чылай объекчĕсене атакăланă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ пĕр пин вĕçÿ тунă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Галифакс» йышши бомбардировщиксем Манри чугун çул объекчĕсене (Парижран 110 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) йышлăн вĕçсе пырса тапаннă. «Москито» йышши самолетсем Франкфурт хулине тата Хĕвеланăç Германири ытти объектсене те тапаннă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем японецсен Разабил районĕнчи (Бирма) вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене йышăннă. Каладан улăхĕнче кĕрешекен чаçсем японецсен Кьяуктауран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри позицийĕсене туртса илнĕ.

ВАШИНГТОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океан флочĕн тĕрлĕ карапĕсене пĕрлештернĕ пысăк мар соединенисем Бото утравĕсене йышăннă. Ку утравсем Квадьилинит утравĕсенчен (Маршаль утравĕсем) 75 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре выртаççĕ.

КĔСКЕН

● 1943 çулта союзниксем тăшманăн 200 подводнăй лодкине ытла путарнă. Урăхла каласан, пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра тăватă çул хушшинче путарнă чухлех путарнă.

● Февраль уйăхĕнче союзниксен авиацийĕ Эгей тинĕсĕнче тăшманăн 18 суднине путарнă тата 13 суднине путарнă пулмалла, унтан 30 суднине сиенленĕ пулмалла. Шыва путарнă суднăсем хушшинче 5.000 тонна тата 4.000 тонна таяканнисем те пур. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00059 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.